***Анисимова Лариса Валерьевна***

учитель

***Егорова Алина Владимировна***

учитель

МБОУ «СОШ №10»

г. Чебоксары, Чувашская Республика

# БЕСПЕРЕВОДНЫЙ МЕТОД ОБУЧЕНИЯ ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ

***Аннотация**: в статье затрагивается тема обучения чувашскому языку в школах с русским языком обучения. Целью статьи является анализ беспереводного метода обучения чувашскому языку. Основное внимание акцентируется на учебных пособиях «Скажи, пожалуйста. Чувашский язык» под редакцией А.В. Блинова и др. для 1–3 классов начальной школы. Выделяются и описываются характерные особенности пособий отдельно для каждого класса. Авторы приходят к выводу, что учебные пособия «Скажи, пожалуйста. Чувашский язык» под редакцией А.В. Блинова и др. для 1–3 классов позволяют обучать чувашскому языку беспереводным методом, и что данный метод обучения чувашскому языку является одним из эффективных.*

***Ключевые слова**: обучение, учебное пособие, чувашский язык, школа с русским языком обучения, беспереводный метод, особенность.*

***Аннотаци**: статьяра вырăс программипе ĕçлекен шкулта чăваш чĕлхине вĕрентес темăна хускатнă. Куçарусăр вĕрентес меслете тĕплĕн тишкернĕ. Пуçламăш шкулăн 1–3-мĕш класĕсем валли кăларнă «Кала-ха. Чăваш чĕлхи» (авторĕсем: А.В. Блинов тата ыт.) вĕренӳ пособийĕсен паха енĕсене кашни класăнне уйрăммăн çырса кăтартнă. Авторсем куçарусăр вĕрентес меслет ачана чăвашла хутшăнма вĕрентмелли чи кирлĕ те тухăçлă меслет пулнине, 1–3-мĕш классем валли кăларнă «Кала-ха. Чăваш чĕлхи» (авторĕсем: А.В. Блинов тата ыт.) вĕренӳ хатĕрĕсем чăваш чĕлхине куçарусăр вĕрентме май панине ĕнентернĕ.*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

***Тӗп сӑмахӗсем**: чӑваш чӗлхи, вӗрентесси, вырӑс программипе ӗҫлекен шкул, куҫарусӑр вӗрентес меслет, вӗренӳ хатӗрӗ, паха ен*

Вырӑс программипе ӗҫлекен хула шкулӗнче чӑваш чӗлхине вӗрентессин *тӗп тӗллевӗ* – вӗренекенсене кулленхи хутшӑнура чӑвашла калаҫма хӑнӑхтарасси. Ҫак тӗллеве пурнӑҫлама куҫарусӑр вӗрентес меслетпе усӑ курни вырӑнлӑ. Ку меслет – вӗреневе пӗр чӗлхерен тепӗр чӗлхене куҫармасӑр йӗркелени.

Чи малтан ачасене ҫын каланине ӑнланма хӑнӑхтаратпӑр, унтан калаҫма вӗрентетпӗр. Вӗренӳ тухӑҫлӑхӗ чӑвашла калаҫнине итленинчен, илтнинчен нумай килет. Сӑмахсем мӗн чул нумайрах илтӗнеҫҫӗ, ҫавӑн чухлӗ лайӑхрах асра юлаҫҫӗ. Уроксенче тӗп вырӑна сюжетлӑ вӑйӑсем выляни, тӗрлӗ хускану туни, рольпе выляни тухса тӑрать. Чӑвашла калаҫу хӑнӑхӑвӗсене ҫирӗплетме япаласене алӑпа кӑтартатпӑр, сӑмахпа каласа ӑнлантаратпӑр, ӳкерчӗксемпе, пит-куҫ вылятӑвӗпе, ятарлӑ паллӑсемпе усӑ куратпӑр, пурӑпа доска ҫинче ӳкерсе те кӑтартатпӑр. Классенче чӑвашла пачах пӗлмен ачасем те пур. Вӗсем валли хӑш-пӗр сӑмаха «пӑшӑлтатса», интонацие е сасса улӑштарса вырӑсла калатпӑр. Уроксенче, паллах, ачасем чӑвашла юрлаҫҫӗ, ташлаҫҫӗ, аудиодисксем итлеҫҫӗ, видеоматериалсем пӑхаҫҫӗ. Теттесемпе, флеш-карттӑсемпе (предметлӑ ӳкерчӗксемпе) тата ытти кӑтарту хатӗрӗсемпе ӗҫлеҫҫӗ.

2016–2018 ҫулсенче вырӑс шкулӗсен 1–3 класӗсене вӗрентме «Кала-ха» вӗренӳ пособийӗсем пичетленсе тухрӗҫ. Ку вӗренӳ кӗнекисене куҫарусӑр вӗрентмелли меслетпе ӗҫлеме хатӗрленӗ. Кӗнекесенче словарьсӗр пуҫне вырӑсла пӗр сӑмах та кӗртмен. «Кала-ха. Чӑваш чӗлхи» вӗренӳ кӗнекисем кӗҫӗн классенче чӑваш чӗлхине вӗрентмелли альтернативлӑ кӑларӑмсем шутланаҫҫӗ.

1–2-мӗш классем валли хатӗрленӗ вӗренӳ кӗнекисем кӗске предложенисемпе ӳкерчӗксенчен тӑраҫҫӗ. Вӗсене мыскараллӑ, сюжетлӑ тунӑ, ачасен пурнӑҫӗпе ҫыхӑнтарнӑ. Вӗренӳ хатӗрӗсем кӗске сӑвӑсемпе, юрӑсемпе пуян.

3-мӗш классем валли ҫырнӑ «Кала-ха. Чӑваш чӗлхи» вӗренӳ кӗнеки тӗрлӗ ӗҫлӗ ӳкерчӗксемпе пуян – вӗсемпе усӑ курса ачасен ыйтусене тӗрӗс хуравламалла, калав е диалог йӗркелемелле, предложенисене вӗҫлемелле тата ытти те. Чӑвашла ирӗклӗн калаҫас тесен вӗренекенӗн сӑмах йышӗ ҫителӗклӗ пулмалла,


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

тĕрлĕ грамматика формине пĕлмелле, сăмах майлашăвĕсемпе предложенисем тума вĕренмелле.

3-мĕш класс кĕнеки 11 модульрен тăрать. Кашни модульрех 6 урок.

Кунта ачасем калаçура тĕл пулакан çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсене усă курма хăнăхаççĕ, пуплеве кĕртеççĕ, хусканусемпе кăтартаççĕ, кирлĕ грамматикăна вĕренеççĕ, текстпа ĕçлеме хăнăхаççĕ тата кăсăклă калавсемпе паллашаççĕ, вĕсене рольпе выляса кăтартаççĕ. Кунсăр пуçне юрă юрлама, сăвă калама вĕренеççĕ, вăйă выляççĕ е тавçăрулăхне аталантараççĕ, тавракурăмне анлăлатаççĕ.

Кĕнекери материал çине таянса хатĕрленĕ япаласен ӳкерчĕкĕсем вĕрентĕве курăмлăрах, илĕртӳллĕрех тума май параççĕ, хăш сăмах мĕнле япалана пĕлтернине куç умне кăлараççĕ, çыхăнуллă пуплеве аталантарма пулăшаççĕ. Вĕсемпе тĕрлĕ вăйă выляма аван.

Сăмахран, *«Çивĕч куç»* вăййа çапла йĕркелемелле. Пĕр-пĕр темăпа ӳкернĕ темиçе карточкăна доска çине çыпăçтармалла. Ӳкерчĕксем çине çур минут хушши тимлĕ пăхнă хыççăн вĕсене пуçтарса илмелле. Халĕ ĕнтĕ вĕренекенсен ас туса юлнă япаласене хăварт каласа тухмалла. Кам ытларах калать, çав çĕнтерет. Вăйă тĕллевĕ – вĕреннĕ лексикăна аса илсе çирĕплетесси.

Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсемпе чăваш сăмахĕсенчи хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма вĕрентес тĕллевпе вара *«Дежурнăй сас паллисем»* вăйă вылятпăр. Ачасене ушкăнсем çине пайланă. Кашни ушкăна сиктерсе хăварнă сас паллиллĕ сăмахсем çырнă карточкăсем валеçсе памалла. Çапла каламалла: «Пирĕн паян дежурнăй сас паллисем «*д*» тата «*т*» *(ытти мăшăрлă хупă сасăсем те пулма пултараççĕ)*. Сирĕн вĕсене сăмахсенче тĕрĕс вырнаçтармалла».

Карточкăри сăмахсем: *ав…ан, ор…ен, пар…а, кăран…аш, йĕл…ĕр, скей…, сĕ…ел, …иван, ви…ре, çăл…ăр, …ăвар, пă…ă* («*т*», «*д*» сас паллисене сиктерсе хăварнă). Кам тĕрĕс вырнаçтарать, çав çĕнтерет.

Ачасен сăмах йышне пуянлатма, хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене ас туса юлма *«Лотолла»* вăйă пулăшать.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Кашни ачанах вĕреннĕ паллă ячĕсем çырнă карточкăсем валеçсе памалла. 1–2 классен вĕренӳ кĕнекисенче япалан паллине пĕлтерекен çакăн пек сăмахсем тĕл пулаççĕ: лайăх – япăх, вăрăм – кĕске, пысăк – пĕчĕк, çӳллĕ – лутра, çутă – тĕттĕм, ăшă – сивĕ, йывăр – çăмăл, хулăн – çӳхе, кивĕ – çĕнĕ, хаклă – йӳнĕ, пылак – йӳçĕ, усăллă – сиенлĕ, ырă – усал, ĕçчен – кахал. Çак сăмахсемпе усă курса карточкăсем, лотосем, хатĕрлемелле. Вĕсене» ачасене парса тухмалла. Кама «Пуçламăшĕ» текен лото лекет, çав пуçлать. Сăмахсен хирĕçле пĕлтерĕшĕсене тĕрĕс тупса пырсан вăйă «Вĕçĕ» тесе çырнă лотопа пĕтмелле.

Çак меслет ачана чăвашла хутшăнма вĕрентмелли чи кирлĕ те эффективлă меслет тесе шухăшлатпăр.

***Список литературы***

1. Блинов А.В. Кала-ха. Чăваш чĕлхи. Скажи, пожалуйста. Чувашский язык 1 класс: учебное пособие для изучения чувашского языка в общеобразовательных организациях / А.В. Блинов, Ю.Е. Анисимова, А.В. Егорова [и др.]. – Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 2016.

2. Блинов А.В. Кала-ха. Чăваш чĕлхи. Скажи, пожалуйста. Чувашский язык 2 класс: учебное пособие для изучения чувашского языка в общеобразовательных организациях / А.В. Блинов, А.В. Егорова, Л.П. Николаева. – Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 2017.

3. Блинов А.В. Кала-ха. Чăваш чĕлхи. Скажи, пожалуйста. Чувашский язык 3 класс: учебное пособие для изучения чувашского языка в общеобразовательных организациях / А.В. Блинов, А.В. Егорова, Л.П. Николаева. – Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 2018.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)